Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАЙ
23
ТУНТИКУН
116 (4929) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерсе, выђăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малала йарар

Социализмла йалхуçалăх çултан çул ӳссе пырать. Йалхуçалăхăн пысăк пайĕ — выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те пысăк утăмсемпе малала кайать. Чăваш республикĕ тăрăх пĕтĕмпе иртнĕ çул хушшинче лашасен хисепĕ 1,1 процент, ĕне выђăхĕ — 7,6 процент, сыснасем — 19,2 процент, сурăхсем — 13,6 процент ӳснĕ.

Социализмла çектăр тăрăх илсен, выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн ӳсĕмĕ татах та пысăкрах. Колхозсенче выђăх-чĕрлĕх хисепĕн ӳсĕмĕ ферма шучĕпе пулса пырать. 1934 çулта сĕт-су фермисенче вăтам шутпа 19,6-шер пуç выђăх пулнă пулсан, халь 44,5-шар пуç шутланать. Сысна фермисенче 39,7 пуç пулнă пулсан, халь вăтам шутпа кашни фермăра 94,2 сысна шутланать. Сурăх фермисем йенĕпе ӳсĕм татах пысăкрах — 28 пуçран 111 пуçа çитнĕ. Çавăнпа пĕрлех выђăх-чĕрлĕх фермисен хисепĕ те, 1934 çулхипе танлаштарсан, чылайах ӳснĕ.

Халăх тăшманĕсем сăтăр туман пулсан, социализмла выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ӳсĕмсем татах пысăкрах пулмаллаччĕ. Çĕрĕç органĕсене хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсем выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малала ӳстерсе пырассине тĕрлĕ майсемпе чăрмантарса, пысăк сийен туса пынă.

Вĕсем, халăх тăшманĕсем, выђăх-чĕрлĕх пачĕн викĕсене пĕтерме тăрăшнă, лайăх йĕркелĕхсенех сухалаттарса пĕтернĕ, курăк акас ĕçе сахалатса пынă, пуҫса кĕртнĕ шата сăтăрла майсемпе тухăççăра кăларнă.

Выђăх-чĕрлĕх тухăçлăхне сахаллатас шутпа халăх тăшманĕсем вырăнти выђăхсене аратлă выђăхсемпе чуптармалли плана та пурнăçа кĕртмесĕр хăварма тăрăшнă, тĕрлĕрен сикекен чирсем сарнă. Выђăх пахалăхне начарлатас шутпа пĕр ăрури выђăхсемпе чуптармала тунă, выђăхсене сăтăрçăла пройектсем тăрăх тунă витесенче усраттарнă. Çав май иртнĕ виç çул хушшинче фермăсенче 3700 пăру, 52 пин ытларах сысна çурисем, 4500 путек илсе пĕтнĕ.

Ку çеç те мар, халăх тăшманĕсем выђăхсене чуптармалли плана та пурнăçа кĕртмесĕр хăварма хытă тăрăшнă. 1937 çулта кашни 100 пуç ĕнерен вăтам шутпа 88,5 пăру çеç илни, 100 пуç ĕçререн 29,4 тыха çеç илни вăл пĕтĕмпех халăх тăшманĕсемпе вĕсене пуйăшса пыракансен ĕçĕсем. Хăшпĕр çĕрте тата кĕсресене кайа йулса чуптарса ураки вăхăтĕнче вĕсене ĕçе кӳлме йурăхлă мар тума тăрăшнă.

Ĕнесен сĕт-су тухăçлăхĕ чакни те сăтăрçăсен аллисĕр пулман.

Выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сăтăрçăсен сийенлĕхĕ пит пысăк. Çав сийенлĕхе пĕтерессин халь парти, совет, çĕрĕç работникĕсем, колхоз руководителĕсем, пĕтĕм колхозниксем умĕнче пит çивĕччĕн тăракан ыйту пулса тăрать. Выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пулнă сăтăрлăх сийенĕн йулашкисене, пĕтĕмпех пĕтерме пĕтĕм колхозниксен массине организацилемелле. Анчах та сăтăрлăх сийенĕн йулашкисене пĕтерес ĕç çителĕксĕр пырать-ха. Чылай вырăнсенче калаçусăр пуçне çав ĕçе конкретлăн тытăнни çук.

Сăтăрлăх сийенĕн йулашкисене пĕтерес тени — выђăхсене чуптарас ĕçе тĕпçлăн иртерессине те пĕлтерет. Выђăхсене чуптарас ĕçе ăнăçлăн, организацилĕн иртерес тесен, районри аратлă ĕнеке çине кĕртнĕ кашни ăйăрпа 40 кĕсререн, вăкăрпа 100 ĕнерен, тăкапа 80—100 сурăхран кайа мар чуптарса хăвармала. Çавна пурнăçа кĕртме мĕн кирлисем пурте пур. Аратлă ăйăр усраман колхоз республикăра пĕрре те çук. Ĕнесемпе сурăхсене искусственнăй майпа чуптарма 45 пункт организациленĕ.

Майăн 1-мĕшне республикĕре 32 пин кĕсререн 10 пин ытларах çеç чуптарса хăварнă. Чылай районсенче выђăхсене чуптарас ĕçе организацилессине чуптару пункти пуçлăхĕсем çине çеç шанса пана. Райĕçтăвком, йалсовет, колхоз председателĕсем çав ĕçрен айаккă пăрăнса ĕçе кирлĕ пек йертсе пымаççĕ.

Ишлей районĕнче иртнĕ çул кĕсресене кайа йулса чуптарнă пирки, кăçал сураки вăхăтĕнче 289 кĕсре ĕçе тухайми пулнă. Канаш районĕнче вăл хисепрен те ытларах. Анчах та, çав районсем çав опыта кăçал та шута илмен, выђăхсене чуптарас ĕçне кăçал та пит кайа пулса пыраççĕ. Ишлей районĕнче пурĕ 830 кĕсре чуптармала пулнă пулсан, майăн 5-мĕшне 325 кĕсре çеç чуптарса хăварнă. Уйрăм йалсоветсемпе колхозсем тăрăх ĕçсем тата та йапăхрах. Катрас йалсоветне кĕрекен колхозсенче 28 кĕсререн мĕн пурĕ те 4 кĕсре çеç чуптарнă.

Выђăхсене искусственнăй майпа чуптарнă хыççăнхи пăрусемпе путексем пит аван пулни халь ĕнтĕ пурине те паллă. Шăхасан районĕнчи Тельман йачĕпе тăракан колхозра иртнĕ çул искусственнăй майпа чуптарнă путексем лайăх пулнине кура, колхозниксем кăçал хайсен сурăхĕсене пурне те искусственнăй майпа чуптарса хăвараççан тăрăшаççĕ. Вăрнар районĕнче пурĕ 8 пунктра майăн 10-мĕшне 530 ĕне пĕтĕлентернĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр çĕрте çак ĕç çине шанмасăр пăхнисем те пур.

Акă Çĕмĕрлере пурĕ 700 ĕне шутланать. 700 ĕне валђи мĕн пурĕ те пĕр вăкăр çеç. Çавна шута илсе Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Çĕмĕрлере искусственнăй майпа чуптармалли пункт организацилеме мĕн кирлине пурне те пана. Анчах çĕмĕрлесем искусственнăй пункт валђи çурт тупаймаççĕ.

Выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçе тĕрĕс организацилени пысăк вырăнта тăрать. Хĕрлĕ Павăшри (Ишлей р.) колхозра чуптару пункти пуçлăхне Карамелкина лартнă. Карамелкин йулташ çав вăхăтрах колхозăн сĕт-су ферми пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Икĕ тĕрлĕ ĕçре ĕçленипе, паллах, унăн икĕ ĕçĕ те кирлĕ пек пулса пыраймасть. Вăл халь 12 кĕсререн 2 кĕсре, 10 ĕнерен 2 ĕне анчах чуптарнă. Чуптару пункти пуçлăхĕ уйрăм, урăх ĕçре тăман, выђăх-чĕрлĕх ĕçне йуратакан колхозник пулмала. Ăна ĕçшĕн тӳлессине те тĕрĕс организацилемелле. Пединоличниксен выђăхĕсене чуптарнăшăн илнĕ хакран çуррине чуптару пунктин пуçлăхне памала.

Районсенчи парти, совет организацийĕсен выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине малашне тата ытларах çавăрăнса пăхмала. Çĕрĕç пайĕсен, йалсоветсем çумĕнчи выђăх-чĕрлĕх секцисен пайанхи тĕп ĕçĕ вăл — выђăхсене чуптарас ĕçе ăнăçлăн иртересси. Сăтăрçăсен сийенлĕхĕн йулашкисене пĕтерсе, выђăх-чĕрлĕх хисепне ӳстерессе, социализмла выђăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвасси чи малтан çавăнтан килет.

Белорус СС Республикĕнчи суйлав умĕнхи пухусенче

МИНСК, майăн 21-мĕш (ТАСС). Белорус СС Республикĕнчи предприйатисенче тата колхозсенче суйлав умĕнхи пухусем хастарлă иртеççĕ. БССР Верховнăй Советне депутата суйлама ĕççыннисем пур çĕрте те пĕрремĕш кандидата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа палăртаççĕ.

БСС Республикĕн Чаусск хула суйлав округĕнчи суйлавçăсен — „Новая жизнь" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ БССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата пĕр шухăшлă пулса И. В. Сталин, В. М. Молатăв, К. Й. Ворошилăв, Н. И. Йежов йулташсене, Белорус К(б)П Тĕп Комитечĕн çекретарĕн ĕçĕсене туса пыракан А. А. Волкăв йулташа тата районра стахановла ĕçлеме пуçаракана, „Новая жизнь" колхозăн чи лайăх стахановкине Улйанă Иванăвнă Махаленкăвăна палăртнă. 1937 çулта Махаленкăвă йулташ пĕр гектартан 13,24 центнĕр йĕтĕн сӳсĕ туса илнĕ.

Бобруйскри йăвăç каскалакан комбинатри рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем, мĕн пурĕ 2 пин çын, суйлав умĕнхи пухура БССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Бобруйскăри Ленински суйлав округĕ тăрăх Белорус К(б)П Тĕп Комитечĕн çекретарĕн ĕçĕсене туса пыракан А. М. Левицки йулташа, БССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне Б. Д. Берман йулташа тата комбинатăн мухтавлă рамщикне, производствăра 30 çул ĕçлекен, партире тăман рабочийе, Макар Иванăвич Белђакова палăртнă.

Чехословаки правителĕствин ĕçĕсем

Германин пысăк çар вăйĕсене Чехословаки чиккисем патне илсе пырса тултарнă пирки тата генлейнăвĕцсем чикĕ патĕнчи районсенче хăйсен провокацилĕ ĕçĕсене йалатнă пирки, Чехословаки правителĕстви республикăна хӳтлес саккуна ĕçе кĕртме йышăннă. Судето-Нимĕç облаçĕ патĕнчи чикĕне çар чаçĕсем йанă. Пĕр çулхи запасра тăракансене мобилизациленĕ. Кунпа пĕрлех грузсем турттаракан автотранспорта та мобилизациленĕ. (ТАСС).

М. И. Калинин

Шупашкарти 1-мĕш суйлав округĕ

Шупашкарти Çыхăну çуртĕнче тата Радиокомитетра ĕçлекен рабочисен, работницăсен, инженерсемпе техниксен, служащисен пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне суйлама

Молатăв, Каганович, Калинин, Ворошилăв, Жданăв, Йежов, Микойан, Чубарь, Андрейĕв

йулташсен кандидатурисене палăртнă, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионăвич Сталин

тата

Тимофей Аркадийĕвич Ахазăв

йулташсен кандидатурисене палăртнă

Çыхăну çуртĕнче ĕçлекен рабочисен, работницăсен, инженерсемпе техниксен, служащисен пухăвĕ йышăннă

РЕЗОЛЂУЦИРЕН

Епĕр ЧАССР Верховнăй Советне пĕрремĕш депутата суйлама халăхсен генилĕ çулпуçне, ĕççыннисен тусĕпе учителне, Ленин ĕçне малала туса пыракана, тĕнчери чи демократилĕ Конституцине туса паракана, социализм çĕнтерĕвĕсен организаторне Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа кандидата палăртатпăр. Вăл йертсе пынипе пирĕн çĕршыв никам çĕнтерейми, аслă державă пулса тăчĕ.

Çавăн пекех, епĕр РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташăн çывăх соратникĕсене, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн çирĕп кĕрешекенсене Молатăв, Каганович, Калинин, Ворошилăв, Жданăв, Йежов, Микойан, Чубарь, Андрейĕв йулташсене кандидата тăрататпăр.

Епĕр РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш халăхĕн чи лайăх хĕрне, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхала хурса ĕçлекене, Шупашкар хула совет председателне, — ПСК(б)П членĕ, 1901 çулта çуралнă, Шупашкар хулинче пурăнать, — Прасковйа Иванăвна Калинкина йулташа кандидата тăрататпăр.

Пуху кандидата тăратнă йулташсенчен РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйланма пирĕн округра баллотировкăна тăма хăйсен килĕшӳне пама ыйтать.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлне, Ленин—Сталин аслă парти ĕçне чĕререн парăнса туса пыракана, ПСК(б)П Шупашкар хула комитет çекретарне, — 1907 çулта çуралнă, Шупашкар хулинче пурăнать, — Тимофей Аркадийĕвич Ахазăв йулташа кандидата тăрататпăр. Епĕр Ахазăв йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Шупашкар хулинчи 1-мĕш суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Çийавă суйлав округĕ

„Факел" колхоз колхозникĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионăвич Сталин

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Анастаçийа Макçимăвнă Гришинă

кандидатурисене тăратнă

„Факел" колхоз колхозникĕсем йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тĕнчери чи демократилĕ Конституци туса паракана, Совет Сойузĕнчи халăхсен аслă çулпуçне Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа тата унăн çывăх соратникĕсене Молатăв, Йежов йулташсене кандидата тăратас. Вĕсенчен баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама „2-я Пятилетка" колхозри паллă трактăристкăна Анастаçийа Макçимăвнă Гришинă йулташа кандидата тăратас. Пуху Гришинă йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Çийав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

ССР Сойузĕнчи аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕ

ССР Сойузĕнчи мĕн пур аслă шкул работникĕсене, профессăрсене, преподавателсене тата вĕренекенсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Йулташсем! Епĕр, ССР Сойузĕнчи аслă шкул работникĕсем, аслă шкул ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри Комитечĕ пухнă Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăва пухăнса, пирĕн рабочисемпе хресченсен социализмлă государствинче аслă образовани ĕçĕне ӳсĕмĕ мĕнле тăнни тĕп ыйтăвĕсене сӳтсе йаврăмăр.

Социализм строителствин 20 çулĕ хушшинче Ленин—Сталин аслă партийĕ йертсе пынипе ССР Сойузĕнче аслă шкулсем нумай тунă, вĕсенче 550 пин çын вĕренет. 50 пин профессăрсем, доцентсем, преподавателсемпе ытти ăслăлăх работникĕсем социализмлă тăван çĕршыв валђи кадрсем хатĕрлеççĕ.

Патша Российĕнчи 90 аслă шкулта буржуази, помещиксен, чиновниксен, чиркӳ çыннисен, тата кулаксен ачисем 125 пин çын вĕреннĕ. Социализм çĕнтерни çĕршывра аслă шкулсем 700 тунă, вĕсенче рабочисен, хресченсен тата совет интеллигенцийĕн ачисем вĕренеççĕ. Елĕк социализмлă революцичченхи патша пусмăрĕ айĕнче пурăннă хут пĕлмен нацисен ĕççыннисем. Пурăннă çĕрте халĕ çĕршер пин çамрăксемпе хĕрсем аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Киргиз СС Республикĕнче социализмлă революцичченхи пĕр аслă шкул та пулман çĕрте халђхи вăхăтра аслă шкулсем 3. Казах ССРеспубликĕнче аслă шкулсем — 14 тунă, Узбек СС Республикĕнче — 26 аслă шкул, Грузин СС Республикĕнче — 16 аслă шкул, Белоруссии СС Республикĕнче — 19 аслă шкул тунă.

Аслă образовани ӳсĕмĕ ытти тăванла сойузлă республикăсенче те çавăн пекех.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ, Совет Правителстви, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тата унăн соратникĕ Молатăв йулташ аслă шкула куллен йертсе пынине кăтартакани вăл — çак ĕçре тунă çитĕнӳсем пулаççĕ. Йулашки 4 çул хушшинче кăна ССР Сойузĕнчи аслă шкулсен бюджечĕ 2,2 хут ӳснĕ. 1934 çулта вăл бюджет 986 мĕлйун тенкĕ пулнă, 1938 çулта — 2.195 мĕлйун тенкĕ çитнĕ. Çав çулсенчех аслă шкул работникĕсен ĕç укçи фончĕ 299 мĕлйун тенкĕрен 675 мĕлйун тенке çити ӳснĕ, вĕренӳ хатĕрĕсен расхучĕсем — 115 мĕлйун тенкĕрен 228 мĕлйун тенке çити, аслă шкулсенче стипенди фончĕ — 388 мĕлйун тенкĕрен 801 мĕлйун тенке çити ӳснĕ.

1938 çулта кăна, аслă шкулсенче штатлă-тӳлевлĕ çистемă тунă май, профессăрсемпе преподавателсен тата çав ĕçри ытти работниксен ĕç укçи фончĕ çумне çĕнĕрен хушса правителствă татах 200 мĕлйун тенкĕ укçа панă. Аслă шкулсенче вĕренекенсене памалли стипендине ӳстернĕ май, 1938 çулта стипенди памалли фонд 200 мĕлйун тенкĕ чухлĕ ӳснĕ.

Профессăрсемпе преподавателсен тата çав ĕçре ĕçлекен ытти работниксен ĕç укçийĕ пĕр çулта кăна вăтамăн 30 процент ытла ӳснĕ.

ССР Сойузĕнчи аслă шкулта ĕçлекен профессăрсен, преподавателсен тата ытти ăслăлăх работникĕсен хăйсен ăслăлăх квалификацине ӳстерсе пыма тата хăйсен идейăлă-политикăлă ӳсĕмне малашне вăйлатса пыма кирлĕ условисем пурте пур.

Совет аслă шкулĕнчи студентсене валђи лайăх тата отлично вĕренме пур кирлĕ материаллă тата културăлă условисем те туса панă.

Пирĕн социализмлă тăван çĕршыври пек аслă образовани ĕçĕ саралса кайни тĕнчере урăх пĕр капитализмлă çĕршывра та çук.

Пур капитализмлă çĕршывсенче те аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ пĕр майăх чакса пырать; аслă шкултан вĕренсе тухнă çамрăк çынсем, хăйсен специаљнăçĕ йенĕпе ĕç тупма пултараймаН пирки, прĕксĕрех официантсене, шоферсене, полицейскисене кĕреççĕ йе прĕксĕрех ĕççĕр тăрса йулма тивет.

Германире фашисла погромщиксем ăслăлăхпа аслă шкул çине хăрушшăн тапăнса пынипе, университетсемпе техникăлă аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ ик-виç хут чакнă. Пиншер учонăйсене концентрацилĕ лагĕрсене йăраççĕ йе тата вĕсене пачах ĕççĕр тăратса хăвараççĕ.

Йăлтах урăхла пирĕн патăрта — социализм çĕнтернĕ çĕршывра. Ăслăлăх работникĕсен шучĕ калама çук пысăккăн ӳссе пырать пулсан та, вĕсем çапах çитмеççĕ. Пирĕн çĕршыв халăх хуçалăхĕ ССР Сойузĕнчи аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăк специалистсене çулсеренех 100.000 çын таран илет, анчах пире çак хисеп те çителĕклĕ мар. Совет аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă кашни çамрăк специалиса çийĕнчех хăй специаљнăçĕ тăрăх ĕç тупса парӑççĕ тата ăслăлăхлă ĕç валђи, културăлă пурнăç валђи пур кирлĕ условисене те туса параççĕ.

Фашисемăн ылханлă троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агентсем, шпионсемпе диверсантсем тата сыщенлеренçем хăйсен ирсĕр ĕçне аслă шкулта та туса пынă. Çав сăтăрла ĕç аслă образовани ӳсĕмне ... мар сийен кӳнĕ.

Тăшмансем сăтăрла ĕçе аслă тума май килнĕ, çавăнта пур çĕрте те тунă. Вĕсем аслă шкулсен вĕренӳ планĕсене йурийĕх пăтраштарнă, преподавателсен кадрĕсене хатĕрлессине чарса тăнă, капиталлăнăй строителствăна чăрмантарса пынă, вĕренӳ çуртĕсемпе общежитисен строителствине пĕрпенпе килĕшмелле мар тунă, чи кирлĕ документсене, аслă шкулсен пурнăçне йĕркелесе пыракан документсене — аслă шкул уставне, производствăлă практика çинчен тунă положенине, аспирантурă положенине пичетлесе кăларас ĕçе йурийĕх вăрăма тăсса пынă, — аслă шкулсене вĕренӳ илмелли планĕсене тултарассине чăрса, учебниксемпе вĕренӳ программисене пичетлесе кăларассине чăрмантарса аслă шкулсен вĕренӳ йланĕсенчен социаллă-економикăлă ăслăлăхсене кăларса пăрахса, политекономипе тата философие вĕрентекен преподавателсене хатĕрлес ĕçе чарса пынă.

Совет разведкин мухтавлă органĕсем, сталинла Нарком Н. И. Йежов йертсе пынипе, троцкисла-бухаринла мерзавецсен ирсĕр йăвисене тупса çĕмĕрсе тăкрĕç.

Анчах епĕр пĕр минутлăха та лăпланса ларма пултараймастпăр. Йăвантчулăхпа тимсĕрлĕх валђи совет аслă шкулĕнче вырăн пулма пултараймасть. Халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ капитализмла йĕритавралăх çинчен кăтартса каланине пирĕн çирĕппĕн асра тытмала. Çакă вăл пире революцилĕ сыхлăха, мобилизацилĕ хатĕрлĕхе пур йенчен те ӳстерсе пыма хушать, халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкса пыма тата пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн хӳтлĕхне пур йенчен те çирĕплетсе пыма хушать.

Пирĕн умра — аслă шкул работникĕсен умĕнче — калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ. Совет Правителствин пуçлăхĕ Молатăв йулташ пирĕн канашлура тухса каласа, аслă шкул работникĕсем умне халђхи вăхăтра чи пирвайхи черетре тумалли задачăна — лайăх учебниксем тăвас задача кăларса тăратрĕ. Молатăв йулташăн çак кăтартса каланине пурнăça кĕртесси пирĕн ĕçри чи пулса тăрать. Пирĕн кĕске срукрах стабиљнăй çĕнĕ вĕренӳ планĕсем тăрăх ĕçлесе пырса аслă шкулсенче вĕренӳ процесне тĕрĕс организацилемелле, аслă шкулсен кафедрисенче ăслăлăхпа тĕпчев ĕçне анлăн сарса йамала, вăл ĕçе аслă шкулăн уйрăмлăхĕсемпе тата çĕршывăн халăх хуçалăхĕ ыйтнисене килĕшӳлĕн туса пымала. Пирĕн ăслăлăхлă-педагогикăлă кадрсене хатĕрлес ĕçе тата вĕсене вĕрентес ĕçе лайăхлатмала тата ăна анлăн туса пымала. Пирĕн хăвăрт тумалли задач — ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1936 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнчи постановлени тăрăх профессăрсемпе преподавателсем тата студентсем хушшинчи дисциплинăна пур майпа та çирĕплетесси тата, аслă шкул ĕçĕсен пур участокĕсенче те лайăх йĕрке тăвасси пулса тăрать.

Совет аслă шкулĕ умĕнче çитес çывăх çулсенче çĕнĕрен вĕренме илекенсен шутне пысăклатас тата аслă шкулсен ĕçĕн пахалăхĕсене лайăхлатас задач тăрать, çав задача — ССР Сойузĕн халăх хуçалăхĕн ыйтăвĕсемпе килĕшӳлĕн пурнăça кĕртсе пымала.

Пирĕн çине — аслă шкул работникĕсем çине — Ленин—Сталин партийĕ тата Совет Правителстви пысăк та хисеплĕ ĕç — пысăк квалификацилĕ совет специалисĕсем, халăх хуçалăхне йертсе пыма пултаракан, Ленин—Сталин партийĕн аслă ĕçĕшĕн мĕн пур вăйне парса ĕçлекен специалиссем, социализмлă илемлĕ тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсене хатĕрлес тата вĕсене вĕрентсе ӳстерес ĕçе хунă. Пирĕн Совет çамрăк специалисĕсене хатĕрлес пĕтĕм ĕç студентсене идейăлă-политикăлă бољшевикла воспитани парса ӳстерес тĕллевпе пулса пымала. Совет аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă специалис аслă Сталинăн техникăна тата бољшевисăма вĕренесси çинчен калакан лозунгне пурнăça кĕртме пĕлме кирлĕ. Буржуазипе унăн агентурине хирĕç — троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла фашисла ирсĕрсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешме пыма тата вĕсем кирек мĕнле маскăпа витĕнсе ĕçлесен те вĕсене тупса тăрашыва çине кăларса палăртма пĕлни, Совет çĕршывне чĕререн йуратни — çакă пулать те ĕнтĕ студентсене идейăлă-политикăлă воспитани парас ĕçĕн тĕп содержанийĕ.

Çуркуннехи екзаменĕсене тата государствă екзаменĕсене лайăх туса иртересси, аслă шкулсене вĕренме илес

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама Чăваш халăхĕ палăртнă кандидатсем

Патăрйел тата Пăлапуç-Пашйел суйлав округĕсем

Турхан районĕнчи Ишле-Шетмĕри С. М. Кирăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен суйлав умĕнхи пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

И. В. Сталин, Н. И. Йежов

йулташсен кандидатурисене Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иван Захарăвич Захарăв

йулташ кандидатурине тăратнă

С. М. Кирăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 54 çын пулнă

Пирĕн çĕршыв малта пыракан вăйлă индустрилĕ, тĕнчере чи малта пыракан йалхуçалăхлă çĕршыв пулса тăчĕ. Пирĕн çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çар вăљљи мĕн кирли пурте пур. Колхозлă пурнăç—телейлĕ савăнăçлă пурнăç. Çак çĕнтерӳсене епĕр пирĕн йуратакан аслă çулпуç Сталин йулташ йертсе пынипе çеç тума пултартăмăр. Çавăнпа епĕр хамăр йенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин йулташ кандидатурине тата унăн çывăх соратникĕ Н. И. Йежов йулташ кандидатурине тăрататпăр, вĕсенчен пирĕн Патăрйел суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарне—Иван Захарăвич Захарăв йулташа кандидата тăрататпăр.

И. З. Захарăв йулташран Пăлапуç-Пашйел суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Вăрнар тата Йуçкасси суйлав округĕсенче

Елĕк районĕнчи „Ударник" колхоз членĕсен пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв

йулташ кандидатурине тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Мирон Андрейĕвич Андрейĕв

йулташ кандидатурине палăртнă

Елĕк, (телефон тăрăх). Кив Матĕкри „Ударник" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен суйлав умĕнхи пухăвĕ пысăк çĕклĕнӳпе иртрĕ. Пухура Вăрнар суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне, Йуçкасси суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сӳтсе йаврĕç.

Пухура чи малтан Антонăв колхозник тухса каларĕ. Вăл хăй йенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташăн чи çывăх соратникне, Совет правительствин пуçлăхне — В. М. Молăтăв йулташа, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Елĕкри МТС трактăрисне М. А. Андрейĕв йулташа кандидата палăртма сĕнет.

Колхозниксемпе колхозницăсем Антонăв йулташ сĕнĕвне пысăк хаваслăхпа йышăнаççĕ.

Елĕк районĕнчи „Ударник" колхоз членĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Пухура 117 çын пулнă

1. Вăрнар суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата халăхăн шанчăклă ывăлне, Сталин йулташăн чи çывăх соратникне, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателне—Вйачеслав Михайлăвич Молăтăв йулташа палăртас.

2. Пуху В. М. Молăтăв йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Вăрнар суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

3. ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Елĕкри МТС-чи трактăрис-стахановеца—1907 çулта, Кив Матĕк йалĕнче çуралнă,—Мирон Андрейĕвич Андрейĕв йулташа палăртас.

4. Андрейĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Йуçкасси суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Çĕнйал суйлав округĕ

Шупашкар районĕнчи Питукассинчи „Память Ленина" колхоз членĕсемпе çав йалти йединоличниксен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Клавдийа Родионăвнă Йевдокимăвă

йулташ кандидатурине тăратнă

КӲКЕÇ. Майăн 19-мĕшĕнче Питукассинчи „Память Ленина" колхоз членĕсемпе çав йалти йединоличниксен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура колхозник Матвей Куликов йулташ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама хăйсен колхозĕнчи пахча-çимĕç бригадирне, стахановкăна Клавдийа Родионăвна Йевдокимăвна йулташа кандидата тăратма сĕнчĕ.

Куликов йулташ сăмахĕ

Пирĕн „Память Ленина" колхоз малта пыракан колхоз. Кăçал колхоз çуракине ытти колхозсенчен малтан пĕтерчĕ. Епĕ, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата хамăран колхозран Клавдийа Родионăвна Йевдокимăвна йулташа тăратма сĕнетĕп. Вăл 6 çул хушши колхозра пахча-çимĕç бригадирĕ пулса ĕçлет. Çак хушăра вăл пахча-çимĕçсене пысăк тухăçлă туса илме май пуррине кăтартрĕ. Вăл—колхозри ударница, йалан активла ĕçлет. Çавăнпа та вăл Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама йурăхлă çын.

Шупашкар районĕнчи Питукассинчи „Память Ленина" колхоз колхозникĕсемпе çĕршыври йединоличниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пухура 73 çын пулнă

Епĕр, „Память Ленина" колхоз колхозникĕсемпе çĕршыври йединоличниксем, тĕнчери чи демократиллĕ Конституцие туса панă пирĕн пĕтĕм ĕçышниксен çулпуçне, пирĕн чăваш халăхне Совет Союзĕнчи ытти пĕтĕм ĕçхалăхĕсене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панă Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнишĕн хĕпĕртесе саламлатпăр.

Çакăн пекех ăна Сталинăн çывăх соратникĕсене, Ленинпа—Сталин ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн чĕрере тăрăшса ĕçлекен Молăтăв, Калинин, Ворошилăв, Каганович, Жданăв, Йежов йулташсене, тата Шупашкар хула совет председателне Прасковйа Иванăвна Калинкина йулташа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнине саламлатпăр.

Питукассинчи „Память Ленина" колхоз членĕсемпе çак йалти йединоличниксем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Шупашкар районĕнчи Питукасси йалĕнчи „Память Ленина" колхоз бригадирне,—1903 çулта çуралнă,—Клавдийа Родионăвна Йевдокимăвна йулташа кандидата тăрататпăр.

К. Р. Йевдокимăвна йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Çĕнйал суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Сĕнтĕрвăрри суйлав округĕ

Сĕнтĕрвăрринчи судоверфри рабочисемпе служăщчисен тата инженерла-техникла работниксен пухăвĕнче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионăвич Сталин, Николай Иванăвич Йежов

тата

Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă

йулташсен кандидатурине тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Михаил Андрейĕвич Андрейĕв

йулташ кандидатурине палăртнă

Сĕнтĕрвăрринчи судоверфри рабочисемпе служăщчисен, инженерла-техникла работниксен пухăвĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

1. Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Иосиф Виссарионăвич Сталин, Николай Иванăвич Йежов тата Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă йулташсене кандидата тăратас.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама ЧАССР Госплан председателне Михаил Андрейĕвич Андрейĕв йулташа кандидата тăратас.

2. Пуху Сталин, Йежов, Андрейĕвă йулташсенчен РСФСР Верховнăй Советне Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма, Михаил Андрейĕвич Андрейĕв йулташран Сĕнтĕрвăрри хула суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Тулик Хураски суйлав округĕ

„Шордан" тата „Моряк" колхоз колхозникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Николай Çеменăвич Хабарăв

йулташ кандидатурине тăратнă

Шупашкар районĕнчи „Моряк" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пухура 105 çын пулнă

Шупашкар районĕнчи „Моряк" колхоз членĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратас ыйтăва сӳтсе-йавнă хыççăн, пурте пĕр саслăн çапла йышăнаççĕ:

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар райĕçтăвкомĕн председателне—Николай Çеменăвич Хабарăв йулташа кандидата тăратас.

Хабарăв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Тулик Хураски суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Епĕр „Моряк" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, Хабарăв йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратса, хамăр умри хуçалăх ĕççене пурнăçласа пырса, суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне—пур ĕççесе те пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме пулатпăр.

* * *

Çавăн пекех Шупашкар районĕнчи Паникассинчи „Шордан" колхоз членĕсем те Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар райĕçтăвком председателне — Николай Çеменăвич Хабарăв йулташа кандидата тăратнă.

Кӳкеç суйлав округĕ

„Майăн 1-мĕш" колхоз колхозникĕсемпе пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи учителсен сойуз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Иван Ваçилйĕвич Дубăв

йулташ кандидатурине тăратнă

Шупашкар районĕнчи Иккассинчи „Майăн 1-мĕш" колхоз колхозникĕсемпе, колхозницисен тата пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсойуз членĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пухура 165 çын пулнă

Епĕр, „Майăн 1-мĕш" колхоз колхозникĕсемпе шкулсенче ĕçлекенĕсем, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама халăхсен çулпуçĕ Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташпа унăн соратникĕсене Молăтăв Ворошилăв, Каганович, Калинин, Жданăв, Йежов йулташсене кандидата тăратнине саламлатпăр.

Епĕр, колхозниксемпе колхозницăсем тата пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профессилĕ сойуз членĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕн çекретарне,—1904 çулта çуралнă, 1927 çултанпа партире тăрат,—Шупашкарта пурăнат, Иван Ваçилйĕвич Дубăв йулташа кандидата тăрататпăр.

Пуху И. В. Дубăв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Кӳкеç суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Урмайел суйлав округĕ

Шăнкăртам районĕнчи „Августăн 1-мĕшĕ" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Зарифулă Галиуллăвич Галиуллин

йулташ кандидатурине тăратнă

Пухура 296 çын пулнă

Галиуллин йулташ сăмахĕ

Ĕлĕк епĕр чухăн, выçăлă-тутăлă пурăнăçпа пурăннă, халĕ пирĕн парти тата совет правительстви пире телейлĕ те пуйан пурнăç туса пачĕç. Епĕр иртнĕ суйлавра хамăр Ленин—Сталин парти ĕçне парăннине кăтартса патăмăр. Çак пулас суйлавра епĕр хамăрăн партине тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа йуратнине тепĕр хут кăтартатпăр. Епĕ Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата Тукай йалсовет председателне, тăван çĕршывăн лайăх ывăлне, Зарифулă Галиуллăвич Галиуллин йулташа сĕнетĕп.

Пĕрлехи пухура йышăннă постановленирен

ЧАССР Верховнăй Советне депутата Урмайел суйлав округĕ тăрăх суйлама „Августăн 1-мĕшĕ" колхоз колхозникĕсенчен тăван çĕршывăн лайăх ывăлне З. Г. Галиуллина,—1907 çулта çуралнă, Шăнкăртам районĕнчи Тукай йалĕнче пурăнат,—кандидата тăратас.

Епĕр Урмайел суйлав округĕнчи пур суйлавçăсем те епĕр тăратнă Галиуллин йулташ кандидатуришĕн тăрĕç, тесе шанатпăр.

Епĕр Галиуллин йулташран Урмайел суйлав округĕ тăрăх, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Йунгă суйлав округĕ

„Çĕнĕ çул" колхоз колхозникĕсемпе Пушкăрт йалĕнчи йединоличниксен пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Сталин, Молăтăв, Ворошилăв, Йежов, Калинин, Каганович, Коссиор, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Андрейĕвă, Калинкинă

йулташсен кандидатурисене тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Михаил Çеменăвич Кљазĕв

йулташ кандидатурине тăратнă

Никитин йулташ сăмахĕ

Суйлав умĕнхи пухура чи малтан „Çĕнĕ çул" колхозри партин пуçламĕш организацин парторгĕ Никитин йулташ сăмах тухса каларĕ. Вăл Ленин—Сталин парти йертсе пынипе, халăхсен çулпуçĕ И. В. Сталин йулташ йертсе пынипе Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем социалисăм обшчĕстви туни çинчен калат.

Сталинла Конституци тăрăх епĕр ĕçлев прави, вĕренӳ прави, кану прави илтĕмĕр. Епĕр çак историлĕ çĕнтерӳсене Сталин йулташ тата унăн çывăх соратникĕсем йертсе пынипе тунă. Çавăнпа та епĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин, Ворошилăв, Йежов, Калинин, Каганович, Коссиор, Андрейĕв, Микойан, Жданăв йулташсен кандидатурине тăрататăп, Чăваш халăхĕнчен епĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă тата Прасковйă Иванăвнă Калинкинă йулташсен кандидатурисене тăратма сĕнетĕп.

Пухура тухса калакан колхозниксемпе йединоличниксем Никитин йулташ сĕнӳне хапăл туса йышăннă. Колхозник Н. Никитин йулташ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Пушкăрт йалсовет председателĕн Михаил Çеменăвич Кљазĕв йулташ кандидатурине тăратнă.

„Çĕнĕ çул" колхоз членĕсемпе Пушкăрт йалĕнчи йединоличниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИРЕН

Епĕр колхозниксемпе колхозницăсем, Пушкăртри йединоличниксем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, К. Й. Ворошилăв, Н. И. Йежов, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, С. Коссиор, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. А. Жданăв, З. А. Андрейĕвă, П. И. Калинкинă йулташсене кандидата тăрататпăр. Кандидата тăратнă йулташсенчен РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Шупашкар суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата епĕр Пушкăрт йалсовет председателне,—1880 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Пушкăрт йалĕнче пурăнат,—Михаил Çеменăвич Кљазĕв йулташа тăрататпăр. Епĕр Кљазĕв йулташран Йунгă округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Шурча суйлав округĕ

Ишлей районĕнчи Мăн-Мамăшри Буденнăй йачĕпе тăракан колхоз членĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Григорий Иванăвич Тепейĕв

йулташ кандидатурине тăратнă

Пухура 78 çын пулнă

Мăн-Мамăшри Буденнăй йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ йышăннă

РЕЗОЉУЦИРЕН

1. Епĕр Буденнăй йачĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратас ыйтăва сӳтсе-йавнă май, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш халăхĕн паллă ывăлне, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлекене, ПСК(б)П Ишлей райкомĕн пĕрремĕш çекретарне,—1906 çулта çуралнă, парти членĕ, Ишлей-Покровскинче пурăнат,—Григорий Иванăвич Тепейĕв йулташа кандидата палăртатпăр.

2. Пуху Тепейĕв йулташран Шурча суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтат.

Шуршăл суйлав округĕ

„Кунер" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Артемий Иванăвич Иванов

йулташ кандидатурине тăратнă

Пухура 115 çын пулнă

Кив Тутайкассинчи „Кунер" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче йышăннă

РЕЗОЉУЦИРЕН

1. ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Кив Тутайкасси йалсовет председателне, Артемий Иванăвич Иванов йулташа,—партире тăмасть, Кив Тутайкассинче, пурăнат,—кандидата тăратас.

2. А. И. Иванов йулташран Шуршăл суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Чăвашкуљпромсойузăн IV-мĕш пленумĕ

Шупашкарти чăпта промсойузăн IV-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум икĕ ыйту сӳтсе йаврĕ: РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес ĕç мĕнле пыни тата 1-мĕш квартăлти производствă планĕн итогĕпе 1938 çулхи ĕçсем çинчен.

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлас кампанинче чăпта промсойузĕнче 276 агитатăр ĕçленĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленессипе Чăвашкуљпромсойуз малтан канашлу туса иртернĕ. Çакăн хыççăн чăпта промсойуз çиçтеминче 249 кружок организациле, вĕсенче Положенисене вĕрентме тытăннă. Ку тĕлĕшпе 217 агитатăр ĕçлет. Кружоксем тавра 3862 суйлавçăсене йавăçтарнă.

Сахал мар агитатăрсене округри тата участкăри суйлав комиççисен членне суйланă. Мамăшри Курбатăв, Шоркинти Виноградăв, Енĕшкассинчи Гераçимăв йулташсене округри суйлав комиççин членне, Çатракассинчи Йегорăв, Тĕмшерти Григин тата Сӳктерти Ставский йулташсене участкăри суйлав комиççин членне суйланă.

Чăпта промсойузĕнче 23 клуб, 86 хĕрлĕ кĕтес, 33 вулав çурчĕ тата 31 физкуљтурă организацисем пур. Куљтурă вăйĕ те сахалах мар. Çапах та вĕсем суйлав кампанине тивĕçлипе хутшăнайман-ха.

Хутла пĕлменнисене вĕрентессе кăларассипе чăпта промсойузĕ ĕçе тытăнман.

Сойуз 1-мĕш квартăл планне 74 процент çеç пурнăçланă. Уйрăмăнах çăпата тăвас тата куљтурăлă йапаласемпе музăкă инструменчĕсем кăларас ĕççем йапăх пыраççĕ. Çĕнйалкасси, Шучурăвă, Мăнал ертелĕсем производствă планне тултарман.

Пленум ĕçри çитменлĕхсене шута илсе, вĕсене пĕтермели майсем çинчен решени йышăнса хăварчĕ.

5

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Вăрнар районĕнчи парторганизацин пухăвĕ

ВĂРНАР (хамăр корр.). Районри коммунисем тăватă кун хушши ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе райком ĕçĕсем çинчен тĕплĕн те хăйÿлăн сÿтсе-йавса суйлавсем туса ирттерчĕç.

Кун йĕрки тăрăх чи малтанах пуху ПСК(б)Партĭ Обком çекретарĕ Павлăв йулташ докладне итлерĕ. Отчот тăрăх 23 коммунис тухса каларĕç. ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 çулти февраль-мартри Пленумĕн решенийĕсене тата çав пленумра Сталин йулташ кăтартса панине пурнăçа кĕртес ĕçĕнче Чăваш парторганизацийĕ пысăк çитĕнÿсем тунине палăртрĕç тухса калакансем.

Парти тата совет органĕсене кĕрсе ларнă троцкисла-бухаринла, фашисла агенчĕсене, буржуаллă националиссене тата вĕсене хÿтĕлекенсемпе сăтăрçăсене хăсатас тĕлĕшпе уйрăмăнах нумай ĕçленĕ. Çавăнпа пĕрлех тата сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе Обком чылай ĕçсем тунине те асăнса хăварчĕ пуху.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ пулăшнипе Обкомăн çĕнĕ руководстви парти тата совет руководствине кĕрсе ларнă троцкисла-бухаринла, буржуаллă-националиссене тата ытти тĕрлĕ тăшмансене тăрă шыв çине кăларса сирпĕтнине районри парти пухăвĕ пысăк кăмăлпа ырларĕ.

Социалисăмшăн, Ленинпа Сталин партийĕшĕн чунтан чĕререн парăннă çынсене — партипе тăракан тата партипе тăман большевиксене çĕршерĕн-çĕршерĕн парти тата совет ĕçĕсене çĕнĕрен лартни, Обком ĕçĕнче тепĕр пысăк çитĕнÿ тунни пулать, тесе хăварчĕ пуху.

Йулашки вăхăтра Чăваш парти организацийĕ чылайах çирĕпленни, çав май коммунисен кĕрешÿлĕ ĕçлес пултарулăхĕ ÿсни вăл — Обкомăн çĕнĕ руководстви большевикла ĕçлесе пынипчен килнĕ.

Çавăнпа та районри парти пухăвĕ Обком отчочĕ тăрăх хăй йышăннă резолюцире „Обкомăн политикăла сул-йĕрне тĕрĕс, практикăла ĕçне пĕтĕмпех çителĕклĕ тесе шутлас", тесе хăварчĕ.

Вăрнар районĕнчи парти пухăвĕ большевикла критикăпа самокритикă аплăн саралнине ирттерĕ. Чăваш парти организаци ĕçĕнче пысăк çитĕнÿсем тунине кăтартса панипе пĕрлех, тухса калакансем çитменлĕхсене те хăйÿлăн кăтартса пачĕç.

Чăваш парторганизацийĕн облаçри XVIII-мĕш конференцийĕ уйăрса лартнă Обкомăн çĕнĕ составĕ чылай вăхăт хушши, Обкомăн 1-мĕш çекретарĕ пулса ĕçленĕ Петрова ĕçрен кăлариччен, халăх тăшманĕсемпе, уйрăмăнах буржуаллă-националиссемпе кĕрешес ĕçе татăклăн тытăнаймасăр тăнă. Кивĕ руководствă йенчен XVIII-мĕш конференцинче самокритикăна хĕснĕ пирки халăх тăшманĕсене, буржуаллă-националиссене вĕçне çитиччен тăрă шыв çине кăларса çитереймен. Пуху халăх тăшманĕсене, буржуаллă-националиссене хирĕç кĕрешессине татах та вăйлатма кирли çине кăтартса пачĕ. Çав май пуху партин облаçри XVIII-мĕш конференцийĕнче Крайком представителĕ пулса килнĕ Спасăв йулташ Обкомăн çĕнĕ руководствине кивĕ руководствăра пулнă çынсене — буржуаллă-националиссене уйăрма сĕнни мĕнрен килни çинчен сÿтсе-йавма кирлĕ, тесе шутларĕ.

Парти тата совет ĕçне республикипе 74 процент таран çĕнĕ çынсене лартни лайăх, анчах ĕçе лартиччен малтан вăл çын ĕçлеме мĕн таран пултарнине, ĕçлеме пултарас шанчăк пуррине лайăххăн пĕлмеле, вăл халăх шанса тăракан çын пулмала, тет пуху. Чылай ĕçе çавăн пек çынсене лартнă та. Анчах та, тухса калакансенчен чылайĕшне обкомăн йалхуçалăх пайĕн пуçлăхне Кольцов йулташа лартни тĕлĕнтерет. Вĕсем (Кровйаков, Николайĕвă, Гусев, Купцов) Кольцов йулташ Сĕрпÿре ĕçленĕ чух йала пĕрре те тухса курманни çинчен, Турханра чух палук политикине пăсса ĕçлени çинчен, коммунисем хушшинче шанчăк сухатни çинчен каласçĕ.

Çавăнпа пĕрлех тата çĕнĕрен парти тата совет ĕçне лартнă çынсене ĕçлеме вĕрентес, вĕсене йалан пулăшса пырас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумали çинчен те коммунисем конкретлăн кăтартса пачĕç.

Районри парти пухăвĕ республикă 1937 çул тата 1938 çулхи 1-мĕш кварталта халăх хуçалăхĕн планне тултарманнине палăртса, 1938 çулхи планна пĕтĕмпех тултармала тума Обком ĕçне татăклăн çĕнетме кирлĕ тесе кăтартса пачĕ. Çав май промышленнăçра, транспортра, йалхуçалăхĕнче, суту-илÿ ĕçĕнче тата культурă строительствинче пулнă халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтерес ĕçе татах та вăйлатмала, терĕ.

Çавăн пекех колхоз строительстви тĕлĕшпе те республикăра ĕç çителĕксĕр пулать, тесе палăртать пуху. Кивĕ руководствăра пулнă халăх тăшманĕсем коллективизаци процентне чăнниччен ытларах ÿстерсе кăтартса вырăнти парти организацийĕсене лăплантарса тăнă. Чылай çĕрте йалхуçалăх ертел уставне пăсса ĕçлеме провокациленĕ. Районри парти пухăвĕ йединоличниксене колхоза кĕртес тĕлĕшпе ĕçе вăйлатма кирлине тата йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пăснине хирĕç вирлĕн кĕрешсе пыма кирлине кăтартса хăварчĕ.

Малашне хуçалăхпа тата партилĕ политикăла ĕçсене Сталин йулташ кăтартса панă пек тĕрĕс сыхăнтарса ĕçлесе пыни пирĕн Чăваш парторганизацине çĕнĕ çитĕнÿсем тума паракан чи кирлĕ услови пулса тăрать, тесе пĕр сасăпах йышăнчĕ Вăрнар районĕнчи парти пухăвĕ.

**
*

„Райкомăн политикăла ĕçне тĕрĕс, практикăла ĕçне çителĕклĕ тесе шутлас", тесе йышăнчĕ пуху ПСК(б)П райком отчочĕ тăрăх. Çапла йышăннине çирĕплетме хăшпĕр фактсемпе цифăрсене илсе пăхар.

Отчотлă вăхăт хушшинче райком халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса пырса партилĕ-политикăла ĕçе чылай çĕклентернĕ.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче районра 535 агитатăр ĕçленĕ, суйлавра 97 процент халăх коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă. Районри парти тата совет организацийĕсене, çавăн пекех тата районран республикăри органсене, Вăрнар районĕнчен пурĕ 60 çын таран çĕнĕрен ĕçе лартнă. Çĕнĕрен парти членĕн кандидатне 19 çын илнĕ, 20 кандидата члена куçарнă. Районра 85 колхозран 54 колхоз 1937 çулта гектартан 100-шер пăтран кайа мар тырпул туса илнĕ. Вăрнарти фосфорит савăчĕ хăйĕн çулталăк планне пĕтĕмпех тултарнă.

Обком отчочĕ тăрăх тухса каланă 23 коммунисран пурте пекех районри работниксем пулнă пулсан, райком отчочĕ тăрăх пуринчен ытларах йалти коммунисем тухса каларĕç. Вĕсем, райком ĕçĕнче çитĕнÿсем пуррине кăтартса панисĕр пусне, пуринчен ытларах партилĕ-политикăла ĕçе малашнĕ татах лайăхлатма мĕн-мĕн тумали çинче чарăнса тăчĕç.

Акă, Александрăв йулташ йалта пĕр пĕччен коммунис. — Иртнĕ çулта епĕ 5 уйăх хушши инструктăр курман, — тет вăл. Йалти коммунисенчен ыттисем те райком инструкторĕсем вĕсене сахал пулăшса пынине кăтартса парасçĕ. Çавăнпа та пуху хăйĕн резолюцийĕ çине инструктăрсем план тăрăх ĕçлеме кирли тата пĕччен коммунисемпе ĕçлессине вăйлатма кирли çинчен уйрăм пункт кĕртрĕ.

Чылай коммунисем районри парти вĕренĕвĕ ĕçĕ çителĕксĕр пынине кăтартса пачĕç. — Кĕркунне епĕр ĕçе вăйлăн та хĕрÿлĕн тытăнатпăр, анчах çур хĕле çитсен, йе нумайа пырать пулсан çуркунне çитесне вара вĕренес ĕç пачах сÿнсе ларать, — тет Вахрамейĕв йулташ.

Ку пĕтĕмпех тĕрĕс. Вăрнар райкомĕ парти вĕренĕвĕ ĕçĕпе мухтанма пултараймасть. Чылай пуçламĕш организацисенче парти вĕренĕвĕн кружок руководителĕсем улшăнса тăнă, чылай руководителĕсем пачах ĕçлемен. Ситменнипе тата хăшпĕрисем (Данилăва) ССР Союзĕн Конституцине йăнăш ăнлантарса пани те пулнă.

Парти вĕренĕвĕ çине хытă çавăрăнса пăхмала, тет пуху. Çавăнпа пĕрлех партилĕ-политикăла ĕçе агитатăрсемпе, çĕнĕрен совет тата парти ĕçне лартнă çынсемпе ĕçлессине вăйлатмала.

Çĕнĕрен парти ретне илес ĕç те çителĕксĕр пырать тесе шутлать пуху. Ку тăраниччен çулталăк хушшинче парти членĕн кандидатне 19 çын илнĕ пулсан, вăл шутран 9 çын Кольцовкăри пуçламĕш организацийĕсенче илнĕ. Ыттисене шута илсен, районри кашни пуçламĕш организацине пĕрер çын та тивеймест. Фосфорит савăтĕнче пурĕ 1550 çын ĕçлет. Вĕсем хушшинче стахановецсем тата ударниксем нумай. Анчах парти ретне илес ĕç савăтра пачах çителĕксĕр. Районра пурĕ 1300 комсомолец, вĕсем хушшинчен те партийе илнисем пит сахал. МТС çумĕнчи пуçламĕш организацинче 70 комсомолецран мĕн пурĕ те 1 комсомолеца çеç парти членĕн кандидатне илнĕ.

Партийе илес тĕлĕшпе çеç мар, комсомолецсемпе ĕçлессине те чылай вăйлатмала, тет пуху.

Йулашкинчен парти пухăвĕ РСФСР Верховнăй Совет тата ЧАССР Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пулса пынине палăртса, массăлă агитацилĕ ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса хăварать. Çавăнпа пĕрлех тата йалхуçалăхĕнче малашне татах пысăкрах çитĕнÿсем тăвас шутпа колхоз строительствине вăйлатма кирлине, колхозсенче пулнă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене хăвăрт пĕтерсе çитерме кирлине тата йалхуçалăх ертел уставне пăснине хирĕç вăйлăн кĕрешмелине кăтартса хăварать.

**
*

Тăваттăмĕш кунне, майăн 20-мĕшĕнче, райком пленумĕн членĕсене, партин облаçри XIX-мĕш конференцине йама 9 делегат тата райкомăн ревизи комиççине 3 çынран суйланă хыççăн, районри парти пухăвĕ хупăнчĕ.

Каçхине райкомăн çĕнĕ составĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум Крылов йулташа райкомăн 1-мĕш, Кудрйашов йулташа — 2-мĕш, Топрикăв йулташа — 3-мĕш çекретаре суйларĕ. Райком бÿроне асăннă йулташсемсĕр пусне Гусев тата Çергейĕв йулташсене суйларĕ.

М. Костин.

Турхан районĕ

Майăн 21-мĕшĕ, (телефон тăрăх). Ĕнер, Турхан районĕнчи парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ уçăлчĕ. Коммунисем пухăва пурте пуханнă. Кун йĕркине йышăнсан, пуху пĕрремĕш ыйтупа ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн отчотне итлерĕ. Отчота Обком представителĕ Карташов йулташ туса пачĕ. Кун хыççăн каçхи ларура отчот тăрăх прениссем пычĕç. Пренире 15 çын тухса каларĕç.

Тухса калакансем парти Обкомĕ троцкиссене, бухаринецсене, буржуаллă-националиссене тата ытти тăшмансене çĕмĕрсе тăкас йенĕпе пысăк ĕçсем туса ирттернине тата çĕнĕ кадрсене партипе хуçалăх ĕçне туса пыма чылай лартнине палăртрĕç. Кунпа пĕрлех Обком çекретарĕсем тата ытти работниксем Турхан районĕнче сахал пулнине палăртрĕç.

Майăн 21-мĕшĕнче ирхи ларура ПСК(б)П райком отчотне Андрейĕв йулташ туса пачĕ.

Алтын-Баш.

ПСК(б)П Канаш райкомĕн пĕрремĕш пленумĕ

КАНАШ. ПСК(б)Парти Канаш организацин районри пухăвĕ майăн 21-мĕшĕнче хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ. ПСК(б)П райком пленумĕ членне 23 çынна, партин облаç конференцине 16 делегат суйларĕç.

Çав кунах райкомăн пĕрремĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум райкомăн пĕрремĕш çекретарне П. А. Белоруссăв йулташа, иккĕмĕш çекретарне А. Н. Никифăрăв йулташа, виççĕмĕш çекретарне Ф. К. Куçмин йулташа суйларĕ.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ çумĕнчи парти вĕренÿвĕн çуртĕнче

Майăн 21-мĕшĕнче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ çумĕнчи парти вĕренÿвĕ çурчĕ пĕрремĕш № типографири агитколлектив валли „РСФСР" темă çинчен калаçу туса ирттерчĕ. Агитатăрсем пысăк хастарлăхпа итлерĕç.

Парти вĕренÿвĕ çурчĕ кашни кунах каçхине 7 сехетрен пуçласа 9 сехет çитиччен хулари агитатăрсене РСФСР çинчен тата РСФСР-а кĕрекен Автономлă республикăсем, крайсем, облаçсем çинчен ăнлантарса парать.

Майăн 25-мĕшĕнче суйлав участкисенче ĕçлекен агитатăрсем валли тĕнчери лару-тăру çинчен калаçу пулать. Калаçу каçхине 7 сехетре пуçланать.

Производствăла çĕкленÿ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Çĕмĕрлери „Большевик" савăт РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунне — ийунĕн 26-мĕшне — çурçуллăх плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илме пулнăччĕ. Савăтри стахановецсемпе ударниксем социалисăмла ĕçтухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешесĕçре большевикла тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Майăн 16-мĕшĕнче савăт екстракт туса кăларас плана 107,8 процент тултарчĕ. 3-мĕш бригадă пĕр кунхи нормăна 126,2 процент тултарнă.

Иваницкий.

Çамрăксен ĕлĕкхи „прависем"

(Архив материалĕсем тăрăх)

Чăваш АССР Конституцин вĕренÿ прави çинчен калакан 88 статйине вуласан, чăвашсен ĕлĕкхи ĕмĕртен ĕмĕре тăсăлса пынă асаплăхĕсем аса килеççĕ. Патша влаçĕ халăха вĕрентес ĕç çине „тĕттĕм, вĕренмен халăха тыткалама çăмăл" тесе пăхнă. Çавăнпа та Аслă Октябĕрти Социалисăмла Революцичченех чăвашсен хушшинче патша шкулсем тума тăрăшман. Хут пĕлекенсем пит сахал пулнă. 1881 çулта Шупашкар уйесĕн земски управĕ уйесра хут пĕлекенсене шута илнĕ хыççăн, 95 пин çын хушшинче 476 çын ал пусма пĕлекенни тупнă. Ку ентĕ уйесри çынсен шутĕнчен хутла пĕлекенсен хисепĕ 0,5 процент пулнине кăтартать. Çав 476 хут пĕлекен çынсем уйесри 259 йал хушшинче пулнă. Вĕсенчен 31 йалĕнче хутла пĕлекен пĕр çын та пулман. Çапла вара хутла пĕлекенсем йал пуçне икĕ çын анчах пулнă. (Истори Арх., Шуп. у. Земски Управăн 523-мĕш ĕçĕ). Уйесра 10-шар пин ача шкул çуккипе хут вĕренмесĕр тăрса йулнă.

1905 çулта Йетĕрне уйесĕнче 21.938 ачаран шкулсенче пĕтĕмпе те 4899 ача çеç вĕренне. Ыттисем шкул айкинче тăрса йулнă. Строительствă валли укçа-тенкĕ паман пирки, шкулсем кулаксенчен тара илнĕ йурăхсăр пÿртсенче, чиркÿсенче, чавсавайсенче çеç ĕçлекеленĕ. Сута, ăшă тата таса шкул çурчĕсем çинчен шухăшлама та май килмен.

1910 çулта Йетĕрне уйесĕнчи управăна Чадуккасси йал учительници Филиппăвă çапла çырнă:

„Хватер хуçи хăйĕн шкул хватерне йури таса мар усрать. Хватер хуçи арăмĕ класра сÿс шăртласа тусан кăларать, тусанне нихăçан та тасатман. Класпа йунашар чăланта кунĕн-çĕрĕн сурăх пăтекĕсем усраççĕ. Çавăнпа класа усал, таса мар шăрш тухса, ачасене вĕренме чăрмантарать"...

Çавăн пек условире вĕренсе ачасем нумай чирленĕ. Архивра управă ĕçĕсене пăхса тухас пулсан, шкул уçас, учительсемпе пупсене шкул ачисене хĕнеме чарас, т. ыт. çинчен çырнă ыйтусемпе жалăбăсем нумай курма пулать. Йетĕрне уйесĕнчи Виçикасси шкулĕнчи учитель çырнă жалăбăна илсе пăхар:

„Епĕ çак шкулта икĕ çул ĕçленĕ хушăра шкул ачисем вар витти чирĕпе аптранисем сисĕнчĕç. Вăл таса мар шывпа усă курнинчен пулас мĕн, мĕншĕн тесен шкул ачисем валли йунашарти лачакаран çĕрсе выртакан шыва илме тивет... Йалта урăх çăл шывĕ йе кулата шывĕ çук... Шкул çумĕнчи чиркÿ площечĕнче таса шыв кулати пур, вăл кулатана управă тасатса тăрать, анчах пуп Бузановски çав кулатаран шкул ачисем валли шыв илме чарать. Çавăнпа шыв çитмен чух ачасем кÿршĕри лачакана кайса ĕçеççĕ, вара ачасем вар чирĕпе чирлеççĕ..."

Çавăн пек ирсĕр условисенче, тасамарлăхра „вĕрентнĕ" ĕлĕкхи шкулсенче. Усăсăр урохсемпе шкул ачисен пуçне муталанă. Халь хи çамрăксем Октябĕр революцин аслă çĕнтеревĕсене савăнса вĕренеççĕ. Хале пирĕн йалсенче инженер, агроном, летчик, учитель врач тата ытти специалиссем пур, хут пĕлмен çын çук. Çаксем пурте вĕсем Ленин—Сталин партийĕ тĕрĕс йертсе пынипе тупнă мухтавлă ĕçсем. Пирĕн çĕршывра çамрăксем валли пĕтĕм — институт, техникум тата ытти пĕтĕм шкулсен алăкĕсем уçă. Халăха вĕрентес ĕçе правительствă питĕ нумай укçа-тенкĕ хурать. Вĕренекенсем валли таса, аслă тата çутă çуртсем, лабораторисем, вулав пÿлĕмĕсем, общежитисем тунă татах та тăваççĕ. Вĕреннĕшĕн çамрăксен укçа тÿлемеле мар, вĕсене хăйсене стипендисем параççĕ.

Социалисăмла çĕршыври çамрăксем пек телейлĕ те савăнăçлă çамрăксем урăх çук. Ĕлĕк, Октябĕрти Аслă революцичченех, çамрăксене ÿсме, савăнса вĕренме май пулман. Крепостниксем, помещиксем тата пупсем çамрăксене тарçăра тытса усранă. Тарçăра пурнасси, вăл — вилĕм умĕнчи пурнă: пулнă, мĕншĕн тесен тарçăна пупсем, помещиксем укçала сутма, илме тата хĕнесе вĕлерме те пултарнă. 1842 çулта Улатăрти помещицă Соколовă тарçисен хушшинче 18 çулхи хĕр Анастасийă Самойлăвă пурăннă. Помещицă Самойлăвăна пĕрмай йах пуçран хĕненĕ. Перечен помещицă Самойлăвăна кĕпесĕм çума хушнă, анчах хĕненипе пуç ыратнăран вăл çăвайман. Çавншăн помещицă 18 çулхи хĕре скалкăпа хĕнесе пуçне шăтарса пĕтернĕ, кайран чĕн пушăпа 20 хут çаптарнă. Çавăн пек хĕненĕ хыççăн Самойлăвă вилнĕ (Ист. Архивĕ, Улатăр у. суд, 1990-мĕш ĕç).

Çавăн пек ирсĕр ĕçсем помещицă Соколовă сахал туман. Çав çулах тепĕр уйăхран хăй патĕнче тарçăра пурăнакан 18 çулхи хĕре Татйана Петровăна çиветĕнчен туртса çÿресе хĕненĕ. Хĕненипе çитмен, çамрăк хĕрĕн пуçĕнчи çÿçне çиветĕнчен туртса кăларса, пуç шăммине ĕнсе хыçĕнчен пуçласа, тÿпине çитиччен çаратнă. Хĕненĕ хыççăн хĕр тÿсеймесĕр вилнĕ (Ист. арх. Улатăр у. суд, 1990-мĕш ĕç).

Çавăн пек пулнă ĕлĕкхи пурнăç. Çапла пулнă ĕлĕкхи чухăн çынсен ĕçлемели, вĕренмели канмали „правасем". Октябĕрти Аслă революци ĕмĕрхи чуралăх сăнчăрне татса, патша влаçне çĕмĕрсе тата експлоататăрсемпе помещиксене пĕтерсе, ССР Союзĕнчи пĕтĕм ĕçхалăхне ĕмĕрхи асаплăхран хăтарчĕ, Ленин кăтартнă çул çине тăратрĕ, телейлĕ пурнăç тума ирĕк пачĕ. Чăваш халăхне хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр нумай таланчĕсене пĕтĕмпе уçса, пурнăçра кăтартма ирĕк пачĕ. Ĕлĕкхи хĕнхур айĕнче пурăннă чăваш халăхĕн хале çĕнĕрен тунă промышленнăçĕ, коллективлă йалхуçалăхĕ тата культури чечекленет. Унăн республикĕ — орденлă республика. Çавăн пек савăнăçлă, культурăлă пурнăçа тата халăхăн телейне ентĕ пĕтĕм ĕмĕрсенчи асларан та аслă документа, Сталинла Конституципе ĕмĕрлĕхе çирĕплетсе хунă. Патшапа унăн тарçисен пусмăрлăхĕпе, хут пĕлменлĕхпе тата трахомпа асап тÿссе пурăннă ĕлĕкхи чăвашсем, хале Совет çĕршывĕн пĕтĕм ĕçхалăхĕпе пĕрле культурăлă тата пуйан пурнăçпа пурăнаççĕ.

П. Йермолайĕв.

Д. С. Коротченко

Украинă ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн предçедателĕ

СОВЕТ УКРАИНИ

Нумай нацилĕ Совет Союзне кĕрекен 11 Советлă Социалисăмлă Республиксем хушшинче хăйĕн хуçалăхла хăватлăхĕпе тата халăх йышĕ тĕлĕшпе Украинă республикĕ РСФСР хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнать.

Революцичченхи Украинăна Турци султанĕсем, Тутар ханĕсем, Польшă шляхтисем, Российă капиталисăсем, Хĕвелтухăçĕнчи империалиссем пусмăрланă тата çаратнă. „Революци пулаччен Украинăна хĕвеланăçĕнчи империалиссем, калас пулать, шăппăн, „вăрçăлă операцисемсĕр" експлоатациленĕ, Украинăра питĕ те пысăк предприйатисем организацилесе (кăмрăк кăларассипе, металл туса хатĕрлессипе т. ыт. те) тата хăйсен аллине нумайĕш акцисене йарса илсе, Франци, Бельги тата Англи империалисĕсем Украинă халăхĕн йупне уççăнах, „саккунлă", йĕркене, шарламасăр ĕмсе пурăннă" (Сталин) *).

Октябĕрти социалисăмла революци Украинă експлоататăрĕсенчен — хапрăк хуçисемпе помещиксенчен, пупсемпе кулаксенчен, ростовщиксемпе спекулянтсенчен тасатрĕ.

Аслă вырăс халăхĕ тăванла активлăн пулăшса пынипе Украинă ĕçхалăхĕ, коммунисла парти тата пролетарилĕ революци генийĕсем — Ленинпа Сталин йертсе пынипе, хăйĕн çĕрĕ çинчен нимĕç, польăк тата ытти империалисла оккупантсене, захватчиксене хăваласа кăларчĕ, влаçа хăйĕн аллине илчĕ тата пролетарилĕ диктатурă туса хучĕ.

Аслă социалисăмла строительствăра ирĕке тухнă Украинă халăхĕ чуралăх, пусмăрлăх тата експлоатаци сăнчăрне аркатса тăкнă ĕççыннисем мĕн тума пултарнине кăтартса парать.

Совет влаçĕ пулнăранпа Украинă Совет Союзĕн чи пуйан республикăсенчен пĕрийĕ, малта пыракан социалисăмла йалхуçалăхлă, индустрилĕ хăватлă çĕршыв, никам çапса аркатайми форпост пек пирĕн тăван çĕршывăн чиккисене сирĕп сыхласа тăракан çĕршыв пулса тăчĕ.

Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче Украинăн социалисăмла промышленнăçĕ гигантла ÿсĕмсем турĕ.

1937 çулта УССР шултра промышленнăçĕн пĕтĕм продукцийĕ 1913 çултинчен 7 хут ытла нумайрах пулнă.

Донри кăмрăк бассейнĕ (УССР тăрăх), пĕрремĕш тата иккĕмĕш пилĕкçуллăхсем хушшинче тĕпренех социалисăмла çĕнелсе улшăннăскер, пирĕн çĕршыва 1937 çулта 67.103 пин тонна кăмрăк пачĕ (1913 çулта капиталисăмла Донбас панинчен виçĕ хут ытла нумайрах), çавăнпа пĕрлех кăмрăкăн 90 процентне механизациленĕ майсемпе кăларнă. Кăмрăк кăларас тĕлĕшпе Украинă Польшăна, Йапонийе, Францийе хуса çитсе иртсе кайрĕ, халĕ пĕтĕм тĕнчере 4-мĕш вырăн йышăнса тăрать.

Украинăн металлурги савăчĕсем 1936 çултах та ĕнтĕ 9 мĕлйун тоннă чукун шăратса кăларнă — ку вăл 1913 çулта патша Российĕ панинчен икĕ хут ытларах, халĕ Францире шăратса кăларнинчен пĕрре çурă йахăнах тата Йапонире шăратса кăларнинчен тăватă хут нумайрах пулать. Макейĕвкăри Кирăв йачĕпе тăракан металлурги савăчĕ кăна Польшăпа Итали пĕрле илсен панă чухлĕ чукун туса кăларать. Совет Украини Польшăринчен çичĕ хут ытларах хурçă шăратса кăларать.

Електроенерги туса кăларасси калама çук вăйлăн ÿсрĕ — вăл вăрçăченхи çулĕшрен 17 хут иртсе кайрĕ. Днепр çинчи гидроелектростанци кăна патша Российĕ пĕтĕмпе туса кăларнинчен нумайрах електроенерги туса кăларать.

Украинăра промышленнăçăн çĕнĕ отраçĕлĕсем шăтса тухса аталанчĕç. Трактăр, алюмини, магни, цинк, пысăк пахалăхлă хурçă, пăспа ĕçлекен хăватлă турбогенератăрсем вăйлă пăравуссем, комбайнсем тата ыт. те туса кăларассине алла илнĕ. Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче Днепрогрес, Харькăври трактăр савăтне, Днепр çинчи алюмини комбинатне, „Запорожсталь", „Азовсталь", Кривой рогри металлурги комбинатне, Харькăври турбогенератăр савăтне, Ворошиловградри пăравуссем тăвакан савăта, Запорожйери комбайн савăтне тата ытти пĕрремĕш класлă савăтсене туса лартнă вĕсене ССР Союзĕнче кăна мар, тата чикĕ леш йенче те пĕлеççĕ.

Пысăк хăвăртлăхпа ÿсеççĕ апат-çимĕç тата çăмăл индустрийĕсем. Апат-çимĕç промышленнăçĕ продукци туса кăларасси 1913 çултине танлаштарсан 3 хут ытла нумайрах ÿсрĕ.

Промышленнăç ÿсипе пĕрле Украинăн рабочи класĕ те ÿссе тĕреклнчĕ. 1937 çул пуçламĕш тĕлне Украинăн пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче 5 мĕлйуна йахăн рабочисемпе служащисем пулнă. Рабочисемпе хресченсем хушшинчен тухнă инженерла-техникла работниксен çĕнĕ кадрĕсене ÿстерсе хатĕрленĕ. Йулашки вунă çул хушшинче кăна — 1927 çултан 1937 çула çити — шултра промышленнăçри инженерла-техникла работниксен шучĕ пилĕк хут ÿснĕ.

Совет Украини — Донбасра шăтса ÿснĕ стахановла йухăмăн тăван çĕршывĕ. Çак хăватлă йухăм халăх хуçалăхĕн пур отраçлисене те йарса илчĕ. Пиншер стахановецсем, кивĕ те „предельчески" нормăсене çĕмĕрсе тăкса, ĕç тухăçлăхĕн халиччен пулман образецĕсене кăтартаççĕ. Йатлă стахановецсен Алексей Стахановăн, Петр Кривоносăн Макар Мазайăн примерĕсемпе мĕлйуншар çынсем вĕренсе ÿсеççĕ.

Социалисăмла индустриализаци ÿсĕмĕсем, колхоз стройĕ çĕнтерни Украинă йалĕн сăн-сăпатне пачах çĕнетсе улăштарчĕç.

Революцичченхи Украинăри хресченсем хушшинче ăкмали çĕр тытман хуçалăхсем 16 процент тата пĕр теçетинран ытла мар çĕр тытакан хуçалăхсем 16,2 процент пулнă. Революцичченхи Украинă йалĕн хуçалăхĕнчен 45,5 проценчĕн ĕç выльăхĕ пулман, 44,9 проценчĕ сухаламалли тата акмалли хатĕрсем пулман. Патша вăхăтĕнче Украинă территоринчи 41 мĕлйун теçетин çĕртен 14 мĕлйун теçетин чи лайăх çĕре помещиксем, мăнастырсем, капиталиссем тытса тăнă, 7,5 мĕлйун теçетин кулаксен аллинче пулнă. Çапла вара, помещиксемпе кулаксен аллинче мĕн пур çĕртен çурри ытла пулнă.

Çаксем пурте айакка тăрса йулчĕç вĕсем урăх пулас çук. Халĕ ĕнтĕ помещиксемпе кулаксем — миройедсем урăх çук.

Колхозлă хресченсем ирĕклĕ совет çĕрĕ çинче пуйан пурнăç тăваççĕ. Украинăри колхозсенче 96,2 процент хресчен хуçалăхĕсем пĕрлешсе тăраççĕ. Çĕре колхозсене çирĕплетсе панă, уншăн ĕлĕк ĕмĕр-ĕмĕр кĕрешÿ пынă. Колхозсем ĕмĕрлĕхех тата тÿлевсĕр усă курма 35 мĕлйун гектара йахăн çĕр панă.

Колхозлă хуçалăх çĕнĕ техникăпа аварланнă. Украинăри колхозсен тата совхозсен хирĕсенче халĕ 88 пин ытла трактăрсем, 27 пин комбайнсем, пиншер ытти машинсем ĕçлеççĕ. Колхозсем акакан пĕтĕм çĕртен 99 процентне машинă-трактăрлă станцисем ĕçлесе параççĕ.

Украинă ахальтен мар ĕнтĕ Совет Союзĕн тырпул паракан чи пысăк районĕ пулса тăрать. 1937 çулта пĕтĕмпе мĕлйард та 300 мĕлйун пăт тĕштырă пухса илнĕ. Украинă 1937 çулти Германи, Польшă, Венгри çĕршывĕсем пĕрле пухса кĕнинчен те ытларах тулă туса илчĕ. Техникăла культурăсем — йĕтĕн, кăшман, çĕрмамăкĕ, табак, рис акасси ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Революцичченхи вăхăтпа танлаштарсан икĕ хут ытларах Украинă çĕрулми тата пахча çимĕçсем туса илет.

Колхоз хирĕсенче пятисотницăсем Демченко, Гнатенко, Байдич йулташсем пуçарса йанă мухтавлă стахановла йухăм Украинăра пысăк тухăçлă тырпул маçтăрĕсене пиншерĕн çуратса ÿстерчĕ. Колхозниксем хушшинчен лайăх, пултарулă агрономсем, трактăрисем, комбайнерсем, механиксем, шоферсем шăтса ÿсрĕç.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ, тÿррĕн тата вăйа хурса ĕçлени пур колхозниксене те пуйан та культурăлă пурнăç туса парать.

Çĕршывăн индустриализацийĕ тата пĕтĕм халăх хуçалăх ÿснипе пĕрле, колхозсем тата вĕсен тупăшĕ ÿснипе пĕрле ĕççынни массисен материаллă пурнăçĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Йулашки 10 çул хушшинче кăна (1926 çултан пуçласа 1936 çула çити) пĕр рабочи тата служащин çулталăкри вăтам ĕç укçи 4,1 хут ÿсрĕ.

Формă йенчен нацилĕ, содержани йенчен социалисăмлă культурă ÿссе аталанса пырать. Революцичченхи Украинă халăхĕн питех те пысăк пайĕ хутла пĕлмен. Халĕ пирĕн пуçламĕш шкулсенче пурне те вĕрентесси пурнăça кĕрсе пырать, ачасем тăван чĕлхепе вĕренеççĕ. Украинăри вăтам шкулсенче халĕ 4.304 пин çын вĕренет. Ку ĕнтĕ 1914—1915 вĕренÿ çулĕнчипе танлаштарсан 26 хут ытларах пулать. Аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ революцичченхи Украинăринчен 5 хута йахăн, техникумсенче вĕренекенсен хисепĕ 6 хут нумайрах.

Аслăлăхпа тĕпчев учрежденийĕсен хисепĕ те чылай ÿсрĕ. Халĕ Украинăра 278 аслăлăхла учреждениссем. 1917 çулта вĕсем 28 кăна пулнă.

Театрсен, клубсен, киносен, библиотекăсен хисепĕ темиçе хут та ÿсрĕ. Украинă халăхĕн чĕлхисемпе пиншер хаçатсем, мĕлйуншар екземплярсемпе политикăла, художествăлă тата аслăлăхлă литературăсем тухса тăраççĕ.

**
*

Украинă халăхĕн пĕтĕм тĕнчипе паллă историлĕ çитĕнĕвĕсем партин ленинла-сталинла наци политикине тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе пулнă. Совет çĕр-

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

*) И. Сталин. Статьи и речи об Украине. Партиздат ЦК КП(б)У. 1936. стр. 67.

ССР Сойузĕнчи аслă шкул работникĕсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕ чĕнсе калани

(Йулашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра)

плана пурнăçа кĕртесси тата çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленесси — пирĕн ĕçĕн çывăх вăхăтра тумалли задачăсем пулса тăраççĕ.

Хамăрăн мĕн пур ĕçе пирĕн сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленсе иртересси́нче активлăн хутшăнса ĕçлессине сыхăнтарса тумала. Çав суйлавсене совет аслă шкулĕн работникĕсен социалисăмлă тăван çĕршыври ытти мĕн пур халăхсемпе пĕрле хăйсен моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне кăтартмала, коммунисăм ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйа хурса, чĕререн тăрăшса ĕçленине кăтартмала. Суйлав кампанийĕн пур участкисенче те ССР Сойузĕнчи аслă шкул работникĕсен ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен массисен малти ретĕнче пымала, ку тĕлĕшпе вĕсем Сталин йулташ совет интеллигенцийĕ çинчен каланине асра тытмала.

„Пирĕн совет интеллигенцийĕ,—тесе каланă Сталин йулташ хăйĕн ССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă докладĕнче,—вăл— пĕтĕмпех çĕнĕ интеллигенци, вăл хăйĕн пĕтĕм тымарĕсемпе рабочи класпа, хресченсемпе çыхăннă". Малала тата: „Кунтăр ĕнтĕ, ку—вăл пĕтĕмпех çĕнĕ, ĕçлĕ интеллигенци, унашкаллине çĕр чăмăрĕ çинчи пĕр çĕршывра та урăх тупас çук".

Рабочи класăн диктатури органĕсене социалисăм строительствине çирĕплетме пулăшса тата халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене— фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсене çĕмĕрсе тăкма пулăшса,— епĕр, ССР Сойузĕнчи аслă шкул работникĕсем, ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн аслă шкулсене çирĕплетессипе, вĕсене ÿстерсе пырасси çинчен панă директивăсене пĕр пăрăнмасăр пурнăçа кĕртсе пырăпăр.

Килĕшÿлĕн тата пурте пĕр пулса ССР Сойузĕнчи аслă образовани ĕçне татах та çÿлĕ пусăма çĕклер.

Больщевиксен партийĕн йалавĕпе, аслă çулпуç, тус тата учител—Сталин йулташ йертсе пынипе коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне малала кайăпăр!

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕнче

Майăн 20-мĕшĕнче, М. И. Калинин йулташ председател пулса йертсе пынипе, Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларура Омск, Калинин облĕçтăвкомĕсен тата Чăваш АСС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн РСФСР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен тунă доклачĕсене сÿтсе-йавнă.

Ĕçтăвакан комитетсен доклачĕсенчен тата Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн инструктăрĕсем пĕлтернĕ тăрăх выранĕсенче суйлава хатĕрленесси йулса пыни паларнă.

Майăн 14-мĕшĕнчен Калинин облаçĕнчи чылай районĕсенче пулас суйлав йачĕпе райĕçтăвкомсен пленумĕсене пухман. Облĕçтăвкомсем районри ĕçтăвкомсене кирлĕ пек пулăшу паман. Калинин хулинчи хăшпĕр райсоветсенче суйлавçăсен спискисене тума ответлă работниксене мар хушнă.

Омск облĕçтăвкомĕ облăçра суйлав участкисем валли çуртсем пур çĕрте те тупса хатĕрленĕ,—тесе çирĕплетсе парат, анчах вăл апла мар. Омск хулинче те чылай участăксен оборудованине йĕркелесе çитермен. Облăçра участкă çуртĕсен оборудованине сыхласа пырăма тăрăшман.

Чăваш республикĕнче суйлав документĕсене йĕркесĕр усранă фактсене чылай тупса палартнă. Чăваш републикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ суйлав документĕсен кирлĕ резервне участăксенчи комиççисенче бÿллетенсемпе конвертсене 10 процентран кайа мар, округсенчи комиççисенче пилĕк процентран кайа мар,—тума мерăсем йышăнман.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн ларăвĕнче итленĕ докладсем тăрăх пренире Калинин, Николайĕвă йулташсем тата ыттисем те тухса каласнă.

Тухса калаçакансем ĕçтăвакан комитетсем умĕнче тăракан пĕрремĕш чĕретри задачсене: суйлавçăсен спискисене тĕрĕс тăвассине, суйлав участкисене хăвартрах йĕркелемелине, документсене сыхласа усрассине йĕркелемеллине, участăксем округсемпе телефонпа тата телеграфпа сыхăну тытассине аванлатмаллине палартнă. Çаксемпе килĕшсе, Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ решенисем йышăннă. Президиум уйрăмăнах суйлав участкисене кĕме ниепле майпа та пропускссем памалли йĕрке тума йураманнине палăă тунă тата вĕсене пăрахăçа кăларма хушнă. Ĕçтăвкомсене документсене сыхласа усрасси мĕнле тăннине, суйлав участкисене йĕркелес ĕç мĕнле пынине çирĕппĕн контроль туса тăма, полиграфи базине çителĕклĕ тăвасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхма хушнă.

(ТАСС).

Джамбул йубилейĕ

Казахстан халăх йурăçин—Джамбулăн творчествăлă ĕçĕ 75 çул тултарнă йатпа майăн 20-мĕшĕнче, Алма-Атта хулинче совет писателĕсен сойузĕпе пĕрле хула совечĕн пленумĕ пулса иртнĕ.

Аслă акынăн творчествăлă ĕçĕ 75 çул тултарни çинчен тунă доклад хыççăн, Джамбул Ленинпа Сталина хисеплесе çырнă çĕнĕ йурри́не йурласа панă.

(ТАСС).

„Майак" колхозри (Вăрмар р.) рекордлă тухăç илнĕ звенора çĕрулми йаровизациле́ççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран): Табакова, Федотова, Исайова колхозницăсем.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи актив канашлăвĕ

Майăн 19-мĕшпе 20-мĕшĕсенче Чăваш АССР Республикĕн Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ пухнă активăн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Актив канашлăвне Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ çистемине кĕрекен республикри предприйатисенчен: предприйати директăрĕсем, техникла руководителсем, цехсен начальникĕсем тата стаханăвĕцсемпе ударниксем—45 çын пухăннă.

Актив канашлăвĕ — выранти промышлĕннăçăн 4 уйăх хушшинчи ĕçĕн итогне сÿтсе-йаврĕ. Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссарĕ П. Й. Самарин йулташ доклад туса панă хыççăн, пренисем пуçланчĕç. Пренире майăн 19-чи каçхи ларура тата 20-мĕшĕнчи ирхи ларура çак йулташсем тухса каларĕç: Мочалов (Метровес), Никифăрăв, Мышков (Вăрмарти хапрăк), Никифăрăв (полиграфтрест), Горбунов (Вăрмарти хапрăк), Захарăв (Трак р-чи кирпĕч савăчĕ), Киселов (Çĕрпÿ хулинчи „Метровес" мастерскойĕ), Долонин (Шупашкарти кирпĕч савăчĕн техникла руководителĕ), Старшов (Шупашкарти кирпĕч савăчĕ), Игнатйĕв (Улатăрти хут купăс тăвакан хапрăк), Родионăв (Аслăлăхпа тĕпчев институчĕ), Александрăв (Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ), Çеменăв (Вăрнарти фосфорит савăчĕ), Сидикăв (Иванăвари кирпĕч савăчĕ), Воронков, Борисăв (Полиграфтрест) тата ыттисем те. Пĕтĕмпе 20 çын ытла тухса каларĕç.

Тухса калакансем выранти промышлĕннăç тата пуринчен ытла райĕçтăвком промышлĕннăçĕ çак 4 уйăх хушшинче йапăх ĕçлесе пынине палăртаççĕ. Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн çистемине кĕрекен предприйатисенчен Шупашкарти тата Иванăвари кирпĕч савăчĕ, сем уйрăмăнах йапăх ĕçлеççĕ. Ку савăтсенче халăх тăшманĕсем тунă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене тĕппипех пĕтерес тĕлĕшпе çителĕклĕн ĕçлемеççĕ. Сăмахран, Шупашкарти кирпĕч савăчĕн кăмакине пройектпа пăхнинчен темиçе хут пĕчĕклетсе тунă, çакăн пирки ĕç питех те кăлтăкланса пырат. Кун пирки савăтра тата Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариатĕнче пĕрмайах калаçаççĕ пулин те, кăмакана тÿрлетес пирки нимĕн те туман. Савăтри рабочисен культурăпа йалла условийĕсем йапăх. Вĕсемпе куллен ĕçлесе пымаççĕ. Стаханăвĕцсен ĕçĕсене çителĕклĕ хак парса вĕсене ĕçре тата вĕренÿре пулăшса пымаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ производствă планĕсем пурнăçланмаççĕ.

Кирпĕч савăчĕсен кăçал 40 мĕлйун кирпĕч кăлармала. Ку савăтсем кирпĕч кăларас плана пурнăçламасан, республикăри кăçалхи пысăк строительствăсене чарса лартма пултараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ актив канашлăвĕ ку савăтсенчен лайăх ĕçлеме уйрăмăнах хыттăн ыйтрĕ.

Канашлура тухса калаçакансем халăх тăшманĕсем тунă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă, уйрăм тĕслĕхсемпе çирĕплетсе каламарĕç. Выранти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн ĕçне, руководствине çителĕклĕн критиклемерĕç. Ку—актив ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх. Райĕçтăвком промышлĕннăçĕн пур представителĕсем те канашлура çук, çавăнпа та П. Й. Самарин йулташ доклачĕсĕр пуçне, районри промышлĕннăç ĕçне лайăхлатасси çинчен сахал каларĕç.

Джамбул йубилей йачĕпе вечĕр

Майăн 23-мĕшĕнче Казах халăх йурăçин-Джамбулăн творчествăлă ĕçĕ 75 çул тултарнă йатпа Шупашкарти пединститут çуртĕнче литературă вечĕрĕ пулат.

Вечĕрта Джамбулăн пурнăçĕпе творчестви çинчен Пединститут преподавателĕ Ведерникăв йулташ доклад туса парат. Доклад хыççăн чăваш поечĕсем тата студентсем Джамбулăн тата хăйсен сăвисене вуласа параççĕ.

Вечĕр каçхине, 8 сехетре пуçланат.

Йапонин çухатăвĕсем

Йапони влаçĕсен официаллă пĕлтерĕвĕсем тăрăх, Йапони çарĕн Çурçĕр Китайри вăрçă вăхăтĕнче 135 пин çын вилнĕ тата аманнă. Вилнисем хушшинче çар офицерĕсем 5 пин тата 600 тинĕс офицерĕсем. Тĕрĕссипе йапонцăсен çухатăвĕсем çакăнта кăтартнинчен пысăкрах.

(ТАСС).

Канашри вакун йусакан савăтра

Майăн 1-мĕшпе 15-мĕшĕсем хушшинче пĕр цех та хăйĕн планне тултарайман.

Пуçтаракан цех 132 вакун вырăнне 73 çеç кăларнă. Кустăрма цехĕ 429 мăшăр кустарма вырăнне 314 мăшăр панă. Рессор цехĕ 825 рессор вырăнне 525 çеç тÿрлетнĕ. Çавăн пекех механически, тимрĕç тата йавăç касакан цехсем те планĕсене нумай тултарайман.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Хулинчи 14-мĕш участкăри суйлав комиççийĕ пĕлтерни

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Хулин 14-мĕш участкăри суйлав комиççин адрĕсĕ çапла: Иарославскайа урам, Калинин йачĕпе тăракан шкул, телефон № 2—58.

Ответлă редактăр замеçтителĕ И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР.

Виçĕ республика ăмăртăвĕ

1938 çулта вăйлă тырпулшăн социалисăмла ăмăртакан виçĕ республикăра çураки планне тултарасси çапла пулса пынă (плана тултарни процентпа):

	Чăваш респ.	Тутар респ.	Мордва респ.
Майăн 1-мĕшне	3,0	34,0	15,0
„ 5 „	32,0	57,0	29,0
„ 10 „	69,0	77,0	49,0
„ 15 „	86,0	80,0	65,0

Тутар республикинче акса пĕтернĕ колхозсенче халь хĕрсех ирхи çĕртме сухи тăвас ĕç пырат.

Алексейĕвари машинă-трактăрлă станцинче Ф. Кунайĕв трактăр бригадинче кашни СТЗ трактăр пуçне 179-шар гектар сухаланă (майăн 10-мĕшне).

П. Ф. Буранăв трактăр бригадинче 172-шер гектар сухаланă. Çав бригадăра ĕçлекен П. С. Борисăв тата В. К. Тихановă трактăриссем 200-шер гектар сухаланă.

Александрăвск районĕнчи Молотăв йачĕпе тăракан колхоз ирхи тĕш-тырăсене 7 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Ку колхозра А. Полякова А. Морозăв 11 ретлĕ çейалкăпа кунне 11—13-шер гектар акса пынă.

Тутар АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ республикăра çураки ĕçне пурне те вĕçлесе çитернĕ хыççăн, çураки ĕçĕпе мала тухнă колхозсене куçса çÿрекен хĕрлĕ йалав тата уйхир стаханăвцисене укçан преми памала тума постановлени йышăннă.

ШУПАШКАРТИ КООПЕРАТИВЛĂ ВĂРМАН ПРОМЫСЛА ЕРТЕЛĔН

ГОЛОДЙАИХĂРИ тата „КРЕСТЬЯНИН" хăма çуракан САВĂЧĔСЕНЕ ХĂЙСЕН ЙĂВĂÇĔСЕНЧЕН хăма çурма ЗАКАЗ ПАНИСЕН çурнăшăн укçа тÿлесе кăçалхи ИЙУНĔН 15-МĔШĔЧЧЕН хăма материалсене савăтсенчен ИЛСЕ ТУХМАЛА. Ку срук иртсен хăма материалĕсем хуçасăр шутланаççĕ, вара вăл хăма-материалсене сутаççĕ.

ПРАВЛЕНИ

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА

малтан ĕçлесе пурăннă рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăшчисен ГОСУДАРСТВĂ ЗАЙОМĔСЕН ОБЛИГАЦИЙĔСЕНЕ илме пыма чĕнеççĕ Облигацисене алла илмели срук кăçалхи ийунĕн 1-мĕшĕччен Ку срук иртсен облигацисене перекет кассине параççĕ.

3—1

ПОРТФЕЛЬ документсемпе çухалнă

Тупакана çак адрĕспе тавăрса пама ыйтатăп: Шихирданы, Райзо, Арзамасову.

ЧĂВАШСЕН ЙАЛХУÇАЛĂХ ИНСТИТУЧĔ

1938—1939 ВĔРЕНŸ ÇУЛĔНЧЕ

студентсене илесси çинчен пĕлтерет

Кăçал агрономипе зоотехникă факультечĕсене илеççĕ

Вĕренмели срук 4 çул та 4 уйăх.

Институт пысăк квалификацилĕ агроном-растениеводсене тата зоотехниксене вĕрентсе хатĕрлет.

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пулаççĕ. Занатисем çентаберĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Института вĕренме кĕме испытанийе тăма вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем (1935 çулччен 9 çуллă тулли вăтам шкултан вĕренсе тухнисем, рабфак, техникум пĕтернисем йе екстернат йĕркипе вăтам шкул программи тăрăх екзамен тытнисем) пултараççĕ.

Зайавлени çумне çак документсем кирлĕ:

1. Вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат.
2. 3 фотокартăчкă—кашнин çинче алă пусса государствă учрежденинче çирĕплеттерни пулмă кирлĕ.
3. Автобиографи.
4. Паспăрта пĕрле илсе килмеле.
5. Çар тивĕçлĕхне кăтартакан справкă.

Вĕренме кĕрекенсене пурне те çак предметсем тăрăх испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхи, математикă, физикă, политграмăтă, хими, географи, тата пĕр-пĕр йут çĕршыв чĕлхи (Англи, Францу, Нимĕç чĕлхи).

Вăтам шкулсенчен (10 çуллă шкулсенчен) „отличнă" паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытани тумасăрах илеççĕ.

Вĕренме кĕрекенсен çуле 17 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран. Вĕренме йышăннисене стипенди параççĕ тата институтăн общежити тата столовăй пур. Испытанине килекенсен пурин те испытани вăхăтĕнче Шупашкарта пурăнмалăх укçа илсе килмеле. Общежити институт парат.

Институтăн почтă адрĕсĕ: гор. Чебоксары, Ленинградская, 19

Килмели адрес: Ст. Канаш, Казанской ж.—д., оттуда автобусом до Чебоксар, или пристань Чебоксары на Волге.

3—1

СОВЕТ УКРАИНИ

(Йулашки)

шывĕн халăхĕсен çитĕнĕвĕсем вĕсихĕррисĕр пысăк. Ĕçре тата творчествăра совет халăхĕ коммунисла аслă партине, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа тав тунине тата вĕсемпĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленине кăтартат. Сталин йулташ йертсе пынипе Сталинла Конституцине çырса хунисене çĕнтерсе, илнĕ, çав çĕнтерÿсене Сталинла Конституци çине йаланлăхах, çирĕппĕн те тĕплĕн çырса хунă. Совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне, хăйĕн совет влаçне, хăйĕн больщевикла партине вĕçĕ-хĕррисĕр йуратат.

Питех те пысăк пуйанлăхсем тытакан Украинă çине Германири тата Польшари фашисла пуçкасакансем тискер кайăк пек выçăхса тата кураймасăр пăхаççĕ. Фашиссемпе вĕсене тара кĕрĕшнĕ агентсем — ылханлă троцкислабухаринла-рыковла бандитсем тата буржуалă-националиссем рабочисемпе хресченсенчен Октаберти социалисăмла революци панă аслă çĕнтерÿсене туртса илме, пирĕн тăван çĕршыва йунлă тинĕсе путарма шутланă.

Совета хирĕçле сылтăмла-троцкисла блока сут тунă фашиссемпе вĕсен агентурин хăйсен умне пирĕн çĕршывра тĕлĕр-хут капиталисăм туса хурас тĕллеве лартнăскерсем, мĕнле тĕлĕнмеле те ирсĕр майсемпе ĕçленине аванах кăтартса панă. Çыншĕлерсен банди Украинăна ССР Сойузĕнчен уйарса, илме тата Украинăра фашисла диктатурă туса хума ĕмĕтленнĕ.

Парти Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ питех те сыхăлăхлă пулнипе, халăхăн йуратнă ывалĕ Николай Иванăвич Йежов йертсе пыракан мухтавлă совет разведки ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе предателсен тата сутăнчăксен ирсĕр бандине тасаран та таса совет çĕрĕ çинчен шăлса ыватнă.

Пирĕн задачă больщевикла сыхăлăха ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пырасси, пирĕн творчествăлă ĕçе сăтăр тума хăтланакан, совет халăхĕн ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçĕ çине тапăнакан пур тăшмансене те тĕпĕ-йĕрĕпех тăпăлтарса ыватасси пулат.

Украинă Советлă Социалисăмла Республикисен аслă Сойузĕн никам уйăраймин пайĕ пулнă, халĕ те тата йаланах пулĕ. СССР-чи мĕн пур республикăсенчи рабочисемпе тата хресченсемпе тăванла сойуз туса çĕнтерсе Совет влаçĕ туса хунă Украинăри рабочисемпе хресченсем хăйсен çĕрĕ çине фашиссене, империалиссене нихăçан та йамĕç. Вырăс, Украинă, Белоруççи, Азербайджан, Грузин тата ССР Сойузĕнчи ытти мĕн пур халăхсен никам аркатайми тăванла сойузĕ халăхăн тăшманĕсене пурне те ним йулмиччен аркатса тăкса, çĕрпичĕ çинчен шăлса ыватат.

Советлă Украинă малашне те мĕн пурне пĕтĕмпех çĕнтерсе пыракан коммунисăм йалавне çÿлĕ тытса пырат, Совет Сойузĕн чиккисен никам аркатайманлăхне çивĕччĕн сыхласа тăрат.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче Украинă халăхĕ хăйĕн республикĕнчи государствă влаçĕн аслă органне—Украинă ССР Верховнăй Советне суйлат. Чечекленсе пыракан Советлă Украинăн ĕççынни массисем пулăс суйлавсене производствăлă тата политикăлă активлăхăн çĕнĕ çĕклевĕвĕне кĕтсе илеççĕ. Хапрăксемпе савăтсенче, шахтăсемпе, рудниксенче, чукунçулсем çинче тата учреждениĕсенче, колхозсемпе совхозсен хирĕсенче, вĕренÿ заведенийĕсемпе аслăлăх институчĕсенче—пур çĕрте те Украинă ССР ĕççыннисем стаханăвла ĕçĕн çĕнĕ тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Украинăри партири тата партире мар больщевиксем массăсен политикăла активлăхне малашне те çĕклентерсе пырас, пулас суйлавсенче коммунистсемпе партире тăманнисен блокне тата ытларах тĕреклетес, Украинă республикĕн Верховнăй Советне халăхăн чи тĕрĕс ывăлĕсене, Ленинăн—Сталинăн никам çĕнтерейми аслă ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хуракана суйлас, тесе, мĕн тума кирлине пурне те тăвĕç.

ПĔЛТЕРŸ

Майăн 23-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Хресчен çуртĕнче Шупашкар хули Совечĕн финанс çекцин пленумĕ пулат.

Кун йĕркинче:

1. Финанс органĕсен тата хуçайствĕнниксен финанс планне тултарас пирки суйлав умĕнхи çоциалисăмлă ăмăртăвĕ çинчен. (Хула финанс пайĕн пуçлăхĕ Золотников йулташ доклад тăват).

Финанс çекцин пур членĕсене те, Шупашкар хулинчи предприйатисемпе учрежденисен руководителĕсене тата бухгалтĕрĕсене, обчăлă инспектăрсене, комсод членĕсене, финанс контроль постисене, зайом уполномоченнăйĕсене, ирĕклĕ страховани тăрăх ĕçлекенсене тата урам комитечĕсен активне пленума пыма чĕнеççĕ.

Пленум хыççăн, художествă пайĕ пулат.

Шупашкар хули Совечĕн финанс пайĕ.

Шупашкарти сăкăр пĕçерекен савăтра

малтан ĕçленĕ рабочисен „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели зайом" облигацийĕсене кăçалхи майăн 25-мĕшĕччен алла илмеле. Ку срук иртсен облигацисене Перекет кассине параççĕ.

Пайан театрсенче клубсенче, сатсенче:

КИНО театрта	Саслă, илемлĕ, çĕнĕ фильм **На северном полюсе** программăра 4 тата 5 № кино-журналсем **Орденоносная Чувашия**

Чăваш Аптекоуправлени

1. Управлениниче ĕçлеме аслă бухгалтĕр
2. Управлениниче ĕçлеме статистик
3. Шупашкарти аптекра ĕçлеме аслă бухгалтĕр
4. Канашри тĕп склатра ĕçлеме аслă бухгалтĕр заместителĕ

КИРЛĔ.

Малтан ăçта ĕçлени справкă кăтартмала. Адрĕс: Чебоксары, Аптекоуправление, телефон № 3-09.

Шупашкарти квас тата тутлă шывсем тăвакан предприйатине Рабочисем кирлĕ

(арçынсем тата хĕрарăмсем).

Ĕçлеме кĕрес текенсем çак адрĕспе пымала: Шупашкар хули, Ленинградскайа урам, 29. Предприйати кантурне.

ХАРПĂРХĂЙ ТĔЛЛĔН ВĔРЕНЕКЕНСЕН

ÇУЛЛАХИ ÇЕÇÇИЙĔ

Чăвашсен Педагогикă Институчĕн харпăрхăй тĕллĕн (заочнă) вĕренекен пур курссен тата факультетсен студенчĕсен çуллахи итоглă çеççийĕ

1938 çулти ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшĕччен пырат.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас ĕçсем тухнă пирки IV-мĕш курсри харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсен çеççийĕ ийунĕн 20-мĕшĕнче пуçланас вырăнне ийунĕн 29-мĕшĕнче пуçланат.

Студент билечĕсене тата зачот кĕнекисене (матрикулсене) хурмăлама харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен студентсен хăйсемпе пĕрле виççĕр фотокартăчкă (8×4 сантиметр пысăкĕш çарапуçăн ÿкертерни) илсе килмеле. Пĕрлех вĕренне материалсем тата паспăрт илсе килмеле.

Çуллахи çеççине килмен заочниксен библиотекăран илнĕ кĕнекесене, учебниксене кайала памала, мĕншĕн тесен, харпăрхăй тĕллĕн вĕренменнисене заочниксен шутĕнчен кăлараççĕ.

ДИРЕКЦИ.

2—2

Уполномоченный Чувашглавлита № 257

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 408.